25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945 АПРЕЛЬ 1 ВЫРСАРНИКУН 62(6813) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем паян, мартăн 31-мĕшĕнче, РАТИБОР хулипе БИСКАУ хулине—çулсен паха узелĕсене тата нимĕçсен Одер шывĕн сулахай хĕрринчи оборонин вăйлă тĕреклĕ пункчĕсене—çапăçса туртса илнĕ.

РАТИБОР хулипе БИСКАУ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: КУРОЧКИН генерал-полковникăн, ГОНЧАРОВ генерал-майорăн, ТЕРТЫШНЫЙ генерал-майорăн, ИЛЬИНЫХ генерал-майорăн, ОЗИМИН генерал-майорăн, ЗУБОВ генерал-майорăн, КАЗАРИНОВ полковникăн, ПЕТРЕНКО полковникăн, КРАСАВИН генерал-майорăн, ЗАМАНОВ полковникăн, БОРИСОВ генерал-майорăн, ГОЛЬЦОВ полковникăн çарĕсем; ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн УПМАНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БЕЛОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КУЗНЕЦОВĂН, КАРЕЦКИЙ полковникăн, ЗАЙЦЕВ подполковникăн, ЩЕРБАК подполковникăн, ЧУРИЛОВ подполковникăн, КОРНЮШКИН подполковникăн, МАКАРОВ подполковникăн танкисчĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЬКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КАБАТЧИКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн МЕНТЮКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн БИТЮЦКИН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКЕНШТЕЙНĂН, ЛЮБИМОВ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, КИВА полковникăн, МИХАЙЛОВ полковникăн, СКВОРНЮК подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн АРХАНГЕЛЬСКИН, НИКИШИН полковникăн, МАЧИН полковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОНЦЕВОЙĂН, ПОЛУЭКТОВ полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн НЕСТЕРОВĂН, ОСТРЕНКО полковникăн, ГУСЛАВСКИЙ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, РАТИБОР хулипе БИСЛАУ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 31-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, УКРАИНАРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, малта асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, РАТИБОР хулипе БИСКАУ хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ **И. СТАЛИН.**

1945 çулхи мартăн 31-мĕшĕ, № 321.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсен командующине Совет Союзĕн Маршалне ТОЛБУХИНА
Фронт штабĕн начальникне Генерал-лейтенанта ИВАНОВА

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, малалла тапăнса пырса, паян, мартăн 31-мĕшĕнче, ВАШВАР, КЕРМЕНД, СЕНТГОТТАРД хулисене—нимĕçсен РАБА шывĕ çинчи оборонин тĕреклетнĕ паха пункчĕсене туртса илнĕ тата БАЛАТОН кӳллинчен кĕнтăртарахра Болгари çарĕн чăçĕсем ЧУРГО хулине çапăçса йышăнса илнĕ.

ВАШВАР, КЕРМЕНД, СЕНТГОТТАРД тата ЧУРГО хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ТРОФИМЕНКО генерал-полковникăн, ГАГЕН генерал-лейтенантăн, Болгари çарĕн генерал-лейтенанчĕн СТОЙЧЕВĂН, ФОМИН генерал-майорăн, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн БРАГИНĂН, ФИЛИППОВСКИЙ генерал-майорăн, СЕМЕНОВ генерал-майорăн, ТОШЕВ генерал-майорăн, ХАДЖИ-ИВАНОВ полковникăн, ФРОЛОВ генерал-майорăн, БАТЛУК полковникăн, СЕРГЕЕВ полковникăн, ХОХЛОВ полковникăн, ДРЕМЕНКОВ полковникăн, ГОРОБЕЦ полковникăн, ХАРИЗАНОВ полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-полковникĕн НЕДЕЛИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ЛИВАНСКИН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДЕВĂН, ПЕТРОВ полковникăн, СИНИЦИН полковникăн, МАЯНСКИЙ полковникăн, СТЕПАНОВ полковникăн, ШИРЯЕВ подполковникăн, ВЛАСЕНКО подполковникăн, ЛЕОНОВ подполковникăн, КУЗЬМЕНКО майорăн артиллерисчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ПАВЕЛКИНĂН, ГОВОРУНЕНКО генерал-майорăн, ЛУКЬЯНОВ полковникăн, ГОРЧИНСКИЙ полковникăн, ШЕВЧЕНКО подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн СУДЕЦĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн ТОЛСТИКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн КОРСАКОВĂН, авиаци генерал-майорĕн БЕЛИЦКИН, авиаци генерал-майорĕн ТИЩЕНКĂН, СМИРНОВ полковникăн, ДЕМЕНТЬЕВ полковникăн, НЕДОСЕКИН полковникăн, УЛЬЯНОВСКИЙ полковникăн, СТЕПАНОВ подполковникăн, ИСАЕНКО подполковникăн, ТЮШЕВСКИЙ майорĕн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-полковникĕн КОТЛЯРĂН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн КИЯШКОН, ПОНИМАШ полковникăн, ФАРОВ полковникăн, ПАВЛЕНКО полковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЕВĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн ТИТОВĂН, авиаци генерал-майорĕн МОРОЗОВĂН, АГАФОНОВ полковникăн, ИЛЬЧЕВ полковникăн, КОТКОВ полковникăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ВАШВАР, КЕРМЕНД тата ытти асăннă хуласене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 31-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕрçирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Украинăри 3-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, вăл шутра СТОЙЧЕВ генерал-лейтенант ертсе пыракан Болгари çарне те, çӳлерехре асăннă хуласене туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, çӳлерехре асăннă хуласене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ **И. СТАЛИН.**

1945 çулхи мартăн 31-мĕшĕ, № 322.

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсен командующине Совет Союзĕн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ
Фронт штабĕн начальникне Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, малалла тапăнса пырса, НИТРА хулине туртса илнĕ тата, ВАГ шывĕ урлă каçса, ГАЛАНТА хулине—Братислава патне пымалли çулсен паха узелне çапăçса йышăнса илнĕ.

НИТРА хулипе ГАЛАНТА хулине туртса илессишĕн пынă çапăçусенче çаксем чапа тухнă: МАНАГАРОВ генерал-лейтенантăн, ЯКОВЛЕВ генерал-майорăн, ТЕРЕНТЬЕВ генерал-майорăн, САФИУЛИН генерал-лейтенантăн, ЕСИН генерал-майорăн, ОГОРОДОВ генерал-майорăн, ЗДАНОВИЧ генерал-майорăн, ПРЕОБРАЖЕНСКИЙ генерал-майорăн, СОБОЛЕВ полковникăн çарĕсем; ПЛИЕВ генерал-лейтенантăн кавалерисчĕсем; артиллери генерал-майорĕн ЗЫКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОПОВИЧĂН, ПАСТУХ полковникăн, ВЛАДИМИРОВ полковникăн, НЕКРАСОВ полковникăн, ЛЕОНТЬЕВ подполковникăн, КИСЛЫЙ подполковникăн, ДЕНИСЕНКОВ подполковникăн, ЛЯМЗИНСКИЙ майорăн артиллерисчĕсем; СУПЯН полковникăн, ЗЕТРАНУ полковникăн, АНТОНОВ подполковникăн танкисчĕсем; авиаци генерал-лейтенанчĕн ПОДГОРНЫЙĂН, авиаци генерал-майорĕн КАМАНИНĂН, САПРЫКИН полковникăн, КЛОБУКОВ полковникăн, ЕРЕМЕНКО подполковникăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ТУПИЧЕВĂН, инежeнри çарĕсен генерал-майорĕн ТЮЛЕВĂН, ИСАЕВ полковникăн саперĕсем; МАКАРЕНКО полковникăн, ДАВЫДОВ полковникăн, НЕСТЕРОВ майорăн, ВОЛЧУКОВ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, НИТРА тата ГАЛАНТА хулисене туртса илессишĕн пынă çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 31-мĕшĕнче, 24 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, çĕр çирĕм тăвата тупăпа вуникĕ хут пĕр харăс персе, Украинăри 2-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, çӳлерехре асăннă хуласене туртса илнĕскерснене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, НИТРА тата ГАЛАНТА хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван [çĕр]шывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ **И. СТАЛИН.**

1945 çулхи мартăн 31-мĕшĕ. № 323.

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 30-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

БЕЛОРУССИРИ 2-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен Данциг патĕнчи ушкăнне çĕмĕрсе тăкас ĕçе вĕçленĕ те мартăн 30-мĕшĕнче ГДАНЬСК (ДАНЦИГ) хулипе крепоçне—питĕ пысăк порта тата нимĕçсен Балтика тинĕсĕ хĕрринчи питех те паха тинĕс-çар базине — штурмласа туртса илнĕ.

ГДАНЬСК хули çине Польша государствин наци флагне çĕкленĕ.

Гданьск хулишĕн çапăçнă чухне фронт çарĕсем 10.000 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ, çавăн пекех тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: самолетсем—84, танксемпе хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—140, хир тупписем—358, минометсем—566, пулеметсем—1.397, бронепоездсем—15, шыв айĕпе çӳрекен кимĕсем—45, паровозсем—306, чугун çул вагонĕсем—6.675, тĕрлĕрен судносем—151, хĕçпăшал, боеприпас тата апат-çимĕç склачĕсем—214. Тăшманăн 39.000 салтакĕпе офицерĕ ытла вилсе пĕтнĕ.

ГЛОГАУ хулипе БРЕСЛАУ хули районĕсенче хупăрласа илнĕ тăшман çарĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

УКРАИНАРИ 2-мĕш фронт çарĕсем, наступлени пуçласа ярса, ГРОН шывĕпе НИТРА шывĕ урлă каçнă та тăшманăн çав шывсен хĕвеланăç хĕрринчи оборонине татса, 50 километр малалла кайнă, КОМАРНО, НОВЫ ЗАМКИ, ШУРАНЫ, КОМЬЯТИЦЕ, ВРАБЛЕ хулисене — нимĕçсен Братислава хули енчи оборонин вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 450 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра НОВА БАНЯ, ВОЛКОВЦЕ, ЛОК, ФАРНАД, СОЛДИНЫ, КЕБЕЛКУТ, МУЖЛА, ТОПОЛЬЧАНКИ, МЛЫНЯНСКЕ—ТЕСАРИ, ДВОРИ, ПЕРБЕТЕ, МАРСЕЛОВА, ЕЖКОВА—НОВА—ВЕС, КОВАРЦЕ, ОПОНИЦЕ, ЖИРАНЫ, ИВАНКА, ЦАБАЙ, ЧАПОР, УРМИН, ТАРДОШКЕД, СЕЛИЦЕ, СЛОВАЦКИЙ МЕДЕР, АНДОД, НАСВАД ятлă пысăк ялсем тата ТОПОЛЬЧАНКИ, ЗЛАТЕ МОРАВЦЕ, МЛЫНЯНСКЕ—ТЕСАРИ, СВЯТОЙ МИХАИЛ, ИВАНКА, ТАРДОШКЕД чугун çул станцийĕсем. Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, ДУНАЙ шывĕн кăнтăр хĕррипе наступлени туса пырса, халăх пурăнакан 30 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—НАДЬБАЙЧ АЛЬШОБАМОШ, ВАЧА, ИКРЕНИ, РАБА—ПАТОНА, ЭНЕШЕ, КОНИ, БЕЗИ, ТАРНОКРОТЫ, БАРВАЧ ятлă пысăк ялсем. Мартăн 29-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче фронт çарĕсем тăшманăн 1.000 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

УКРАИНАРИ 3-мĕш фронт çарĕсем, БАЛАТОН кӳллинчен хĕвеланăçнелле наступлени туса пырса, мартăн 30-мĕшĕнче ЗАЛАЭГЕРСЕГ хулипе КЕСТЕЛЬ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—ДЕМЕНТЕР, ФЕЛЬШЕОСКО, АНДРАШФА, КАРАТФЕЛЬД, БОГОД, МАГИКАПОРНАК, НЕМЕТФАЛУ ятлă пысăк ялсем.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах фронт çарĕсем, Болгари çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, БАЛАТОН кӳллинчен кăнтăртарахра тăшман оборонине татса кĕнĕ те, 30 километр таран малалла кайнă, НАДЬБАЙОМ, БЕГЕНЕ, МАРЦАЛИ тата НАДЬЯТАД хулисене—нимĕçсен оборонин НАДЬКАНИЖА таврашĕнчи нефть районне хӳтĕлесе тăракан вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕсене—туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă. Вăл шутра—КЕРЕСТУР, БЕРЕНЬ, ВЕРШ, КЕТЕЛЬ, МЕСТЕГНЕ, ТАИШОНЬ, НЕМЕШДЕД, ВЕЙСЕ, ФЕЛШЕШЕГЕШД, ШОМОДЬСОБ, БОЛХАШ, ТАРАНЬ, БЕЛАВАР ятлă пысăк ялсем тата КЕРЕСТУР, КЕТЕЛЬ, ДЬЕТАПУСТА, МЕСТЕГНЕ, АЛЬШОШЕГЕШД, ШОМОДЬСОБ, ВИЗВАР чугун çул станцийĕсем.

КЕСЕГ хулинчен çурçĕртерехре фронт çарĕсем Австри чикки урлă каçнă та Австри çĕрне кĕрсе кайнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата чылай пунктра тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Мартăн 29-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 78 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 8 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРЕН АВИАЦИ АВСТИРИ ВИНЕР НОЙШТАДТ ХУЛИНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 30-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Винер Нойштадт хулинчи (Австри) вăрçă объекчĕсене пырса çапнă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем тухнă. Пушарсенче вăйлă взрывсем пулнă.

☆ ☆ ☆

Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем паян Гданьск (Данциг) хулипе крепоçне штурмласа туртса илнĕ. Тăшман ку хулана нумайччен хӳтĕлесе тăма хатĕрленнĕ. Хула патне пымалли вырăнсене хăватлăн çирĕплетнĕ район хӳтĕлесе тăнă. Çав район вецĕ оборона линийĕнчен тăнă. Районри халăх пурăнакан пур пунктсене те нимĕçсем тĕреклетнĕ пунктсем туса хунă, вĕсене йĕри-тавра хӳтĕлемелле туса йĕркеленĕ. Хула хĕррисенче тимĕрпе бетонран дотсем туса тултарнă, хирти тата çыранри артиллери валли казематсем тунă, çар çыннисене пытанса тăма çĕр айĕнче убежищĕсем туса пĕтернĕ. Чул çуртсенче персе тăмалли вырăнсем тунă, вĕсене пĕр-пĕринпе çĕр айĕнчи çулсемпе пĕрлештернĕ. Хула урамĕсенче гитлеровецсем траншейăсем чавнă, ытти тĕрлĕ чăрмавсем тунă, вĕсен хыçне тӳррĕн пеме тупăсем вырнаçтарса хунă. Хулана нимĕç çарĕсен пысăк вăйĕсем хӳтĕленĕ, вĕсене çар карапĕсем çинчи артиллери хăйĕн вут-çулăмĕпе пулăшса тăнă. Тыткăна лекнисем каласа кăтартнă тăрăх, Гитлер хăй çарĕсене Данцига юлашки салтак юлмиччен хӳтĕлеме питĕ çирĕп приказ панă. Крепоçпа тата питĕ лайăх позицисемпе усă курса, нимĕçсем Гданьск патĕнче Хĕрлĕ Çарăн пысăк вăйĕсене нумай вăхăт хушши чарса тăма шутланă. Анчах та совет çарĕсем, ăстан та татăклăн кĕрешсе, гитлеровецсен планне пăрахăçа кăларнă.

Пирĕн пехотинецсемпе танкистсем, артиллерипе авиаци пулăшса тăнипе, кăнтăр енчен, хĕвеланăç енчен тата çурçĕр енчен наступлени туса пырса, нимĕçсен оборонине татнă та квартал хыççăн квартал тăшман чăçĕсенчен тасатса пынă. Паян совет чăçĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, хулан хĕвелтухăç пайне йышăннă. Нимĕçсен Гданьскри оборонин юлашки тĕрекне—хулан кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи бастионĕсене туртса илнĕ. Çапла ĕнтĕ Белоруссири 2-мĕш фронт çарĕсем кĕске вăхăт хушшинчех тăшманăн хăватлă оборонине çапса аркатнă, нимĕç çарĕсен пысăк ушкăнне çĕмĕрсе тăкса, Гданьск хулипе крепоçне—питĕ пысăк порта тата нимĕçсен Балтика тинĕсĕ хĕрринчи питех паха тинĕс-çар базине—штурмласа туртса илнĕ.

* * *

Украинăри 2-мĕш фронт çарĕсем Братислава хули енче наступлени пуçласа янă. Темиçе кун каярах советсен малти отрячĕсем, артиллери персе хӳтĕлесе тăнипе, Грон шывĕ урлă каçнă та çав тери хăвăрт атакăласа, çав шывăн хĕвеланăç хĕрринчи тĕреклетнĕ икĕ пункта туртса илнĕ. Çапла Грон шывĕн хĕвеланăç хĕрринче хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Нимĕçсем, пирĕн малти отрядсене каялла сирсе ывăтма хăтланса, темиçе хутчен те контратакăна кĕре-кĕре кайнă. Çав хушăра пирĕн инженери подразделенийĕсем хунă каçăсем тăрăх Грон шывĕ урлă советсен тĕп вăйĕсем каçнă. Артиллери тата авиаци хатĕрлесе панă хыççăн, пирĕн çарсем наступлени пуçласа янă та нимĕçсен нумай вăхăтлăха тунă, шалалла инçене каякан оборонине татнă. Тăшман хăй тылĕнчен резервсем илсе пынă та хытă хирĕç тăнă. Совет чăçĕсем, нимĕçсене сире-сире ярса, Врабле хулине туртса илнĕ. Çитĕнĕве вăйлатса пырса, пирĕн çарсем, анлă фронтпа Нитра шывĕ çине тухнă та чылай тĕлте пĕр чарăнса тăмасăр, çав самаях пысăк чăрмав пулса тăракан шыв урлă каçса кайнă. Советсен çăмăллăн куçса çӳрекен соединенийĕсем Новы Замки хули урамĕсене вăркăнса кĕрсе кайнă, вăйлăн çапăçнă хыççăн хулана туртса илнĕ. Совет пехотинецĕсем, Дунай флотилийĕн карапĕсем пулăшса пынипе, çав тери хăвăрт пырса çапса, Комарно хулине—Чехословакин пысăк промышленность центрне—йышăннă. Комарно хулинче суднăсем тумалли верфьсем нефть юхтаракан, машинăсем тăвакан, снарядсем тăвакан тата ытти заводсем те пур. Пирĕн çарсем трофейсем нумай тытса илнĕ.

* * *

Украинăри 3-мĕш фронт çарĕсем çаплах йăпăлăн наступлени туса пынă. Совет чăçĕсем Зала шывĕ тăрăх 30 километр малалла кайнă та нимĕçсене чугун çулсен узелĕ пулса тăракан Залаэгерсег хулинчен сирпĕтсе кăларнă. Гитлеровецсем контратакăна кĕрсе кайнă, анчах та вĕсене йывăр çухатусем кӳрсе каялла сирсе ывăтнă. Пирĕн ытти чăçсем Кестель хулине туртса илнĕ, çапла вĕсем Балатон кӳллин çурçĕр-хĕвеланăç çыранне тăшмантан тасатса пĕтернĕ. Кун каçичченхи çапăçусенче 3.000 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенне 30 самолет, 31 танк, 13 бронетранспортер, 47 хир тупппи, минометсем, пулеметсем нумай тата çар пурлăх склачĕсем тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Совет Союзĕн Маршалĕсене И. С. Конева, Г. К. Жукова тата К. К. Рокоссовские „Çĕнтерӳ" орденĕпе наградăласси çинчен

Анлă çар операцийĕсене ертсе пырас тĕлĕшпе Верховный Главнокомандовани панă заданисене лайăх пурнăçланăшăн, çав сене пула нимĕçсен фашистла çарĕсене аркатса тăкас тĕлĕшпе çав тери паллă çитĕнӳсем тунăшăн

Совет Союзĕн Маршалне Иван Степанович **Конева**
Совет Союзĕн Маршалне Георгий Константинович **Жукова**
Совет Союзĕн Маршалне Константин Константинович **Рокоссовские**
«Çĕнтерӳ» орденĕ парса наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1945 çулхи мартăн 30-мĕшĕ.

Д. И. Фонвизин çуралнăранпа 200 çул тултарас умĕн

Д. И. Фонвизин çуралнăранпа апрель уйăхĕнче 200 çул тултарать. Çавна май илемлĕ литература кăларакан государство издательстви Д. И. Фонвизинăн пурнăçĕпе творчестви çинчен Д. Благой профессорăн критикăпа биографиллĕ очеркне кăларать. Çавăн пекех тата «Вырăс писателĕсем Фонвизин çинчен» ятлă кĕнеке тухмалла.

Д. И. Фонвизин сочиненийĕсене пĕр том туса пичетлесе кăлармалла. Вăл тома «Бригадир» тата «Недоросль» комедисем, художествăллă проза, сăвăсем, баснйăсем тата çырусем кĕреççĕ. (ТАСС).

ТĂВАН ÇĔР ÇИНЧЕ

Польшăран Украинăна украинецсен çĕнĕрен çĕнĕ ушкăнĕсем куçса килеççĕ. Колхозниксем хăйсен тăванĕсене ăшшăн кĕтсе илеççĕ, вĕсен пурлăхне турттарма, хваттерĕсене юсама, выльăхĕсем валли апат турттарма пулăшаççĕ.

Сталино облаçĕнче унта куçса килекенсене пурне те малтанах хатĕрлесе хунă çуртсене вырнаçтараççĕ, вĕсене хутмалли параççĕ, вĕсем валли колхозниксем хăйсен запасĕсенчен апат-çимĕç фончĕсем тунă.

Кировоград облаçĕнчи колхозниксем куçса килнисене вырнаçтармалли çуртсене тата выльăх сарайĕсене йĕркене кĕртнĕ, сарайсем патне 15.500 центнер выльăх апачĕ турттарса хунă. (ТАСС).

ХĔВЕЛАНĂÇ ДВИНА УРЛА ÇĔНĔ КĔПЕР ХЫВНĂ

Рига хулинче Хĕвеланăç Двина шывĕ урлă автомобильсем, трамвайсем тата çурăн çынсем халь çĕнĕ кĕперпе каçса çӳреме пуçланă. Кивĕ кĕпере нимĕçсем сирпĕнтерсе янă пулнă. Çумăрне-юрне пăхмасăр, сивĕ çил çинче талăкĕ-талăкĕпе ĕçлесе, строительсем çĕнĕ кĕпер тунă. Вĕсем тăрăшса ĕçленине пула, кĕпере планра палăртнă срокран 10 кун маларах туса пĕтернĕ. (ТАСС).

Комбинат май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнчĕ

Çак кунсенче Çĕмĕрле комбинатĕнче ĕçлекенсен пухăвĕ пулса иртрĕ. Унта январьпе февраль уйăхĕсенчи ĕçсен итогĕсене пăхса тухрĕç, май уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнасси çинчен сӳтсе-яврĕç.

Комбинат Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртура лайăх тĕслĕхсем кăтартса ĕçлет. Январьпе февраль уйăхĕсенче вăл ăмăртура 2-мĕш, 3-мĕш вырăнсене йышăнчĕ.

Комбинат коллективĕ Пĕтĕм тĕнчери ĕç çыннисен уявне—Майăн 1-мĕшне татах та пысăкрах çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илесшĕн. Уяв ячĕпе социализмлă ăмăртăва хутшăнса, вăл çакăн пек обязательствăсем илчĕ.

1945 çулăн малтанхи 4 уйăхĕнчи производство программине срокчен—апрелĕн 22-мĕшĕ тĕлне тултармалла; продукцин хăйне ларакан хакне планпа пăхнинчен 1,3 процент чухлĕ йӳнетмелле; ĕç тухăçлăхне 4 процент чухлĕ ӳстермелле; продукци пахалăхне лайăхлатмалла, цехсенче брак тунине январь уйăхĕнчинчен 25 процент чухлĕ чакармалла. **А. КАРТАШОВА.**

Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерĕвĕсене ответлесе

СОВЕТСКОЕ. Хĕрлĕ Çарăн Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи çитĕнĕвĕсене ответлесе, районри колхозсем фронта пулăшассине татах та вăйлатрĕç. Вĕсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен парса татма тăрăшаççĕ. Александровскинчи «Красное Сормово», Уйкас-Асламасри «Искра», Мăн Чурашри «Прогресс», Улăп-Шăмашри «Спутник колхозника», Ванькушкĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозсем тата ыттисем те государствăна аш-какай кăçалхи çулшăн парса татса, 1946 çулшăн та чылай пачĕç.

(Хамăр информ.).

Çуракине тĕплĕн хатĕрленетĕн— вăйлă тырпул туса илетĕн

„ÇУРАКИЧЧЕН ТЕМ ТЕ ТĂВĂПĂР-ХА..“

ОКТЯБРЬСКОЕ. Партии 17-мĕш съезчĕ ячĕпе тăракан колхозра çуркунне акма вăрлăхсем çителĕклĕ, анчах вĕсене сортласа хуман, кондицие лартман. Ялхуçалăх машинисемпе плугсене те юсаса пĕтермен. Ут таврашĕсемпе транспорт инвентарĕ çителĕксĕр, пуррисем — юсавлă мар.

Вырăнти удобренисем хатĕрлесе хире кăлармалли уйăхлăх иртнĕренпе хире тислĕк кăларас ĕçе пачах та манса кайнă. Унтанпа ĕнтĕ пĕр лав те тислĕк тăкман.

Колхозниксем пушă вăхăтра агротехникăна вĕренме кăмăл тăваççĕ, анчах кружок организацилеме никам та шутламасть.

— Çуракиччен тем те тăватпăр-ха,—тесе лăплантарать колхоз председателĕ В. Героев юлташ. Анчах çураки аякра мар. Вăл Героев пек çаврăнăçусăр руководительсене кĕтсе тăмасть, çывăхарсах килет.

С. РУМЯНЦЕВ.

Лашасене хакламан çĕрте

СОВЕТСКОЕ. Вăрманкас Асламасри «Трудись» колхозра лаша-выльăхсем 67 пуç шутланаççĕ, вĕсенчен ĕç лашисем—38 пуç. Анчах вĕсене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре пысăк йĕркесĕрлĕхсем палăраççĕ. Лайăх ўт-пўллĕ лашасем кунта пачах çук, вăтам ўт-пўллисем 11 кăна, ыттисем ĕçре йĕркесĕр усă курнипе е хăмăт-ĕнерчĕк тивнипе стройран тухнă.

Çакă вăл пĕтĕмпех лашасем çине чунсăррăн пăхнинчен килет. Кўлмелли хатĕрсем çителĕксĕр тата вĕсем çĕмĕрĕлсе пĕтнĕ. Кашни лашана кўлмелли хатĕрсем уйăрса паман. Лашасем çине чунсăррăн пăхакан колхозниксем çинчен правлени ларăвĕнче те, колхозниксен пĕрлешўллĕ пухăвĕнче те сўтсе-явмаççĕ.

Кунта лаша апачĕсем çителĕклĕ. Анчах вĕсене тирпейлĕ тыткаламаççĕ, тăккаласа пĕтереççĕ. Улăх утине кўрсе килнĕ чухнех çурри тенĕ пек тăккаласа пĕтернĕ. Кўрсе килсен, ăна лаша вити патне тăкаççĕ те выльăхсем таптаса, сая яраççĕ.

Лашасене рацион тăрăх тăрантмаççĕ, вăхăтра шăвармаççĕ, тасатса тăмаççĕ. Витере тислĕк темĕн чухлех выртать. Лашасем тăмалли çуртсене ăшăтса çитермен. Конюхсем çĕрле лашасем патне тухса та курмаççĕ, хурал ĕçне йĕркелемен.

Çураки çывхарать. Акана вăхăтра та пахалăхлăн туса ирттерес тесен, çирĕп те чăтăмлă лашасем кирлĕ. Анчах колхоз председателĕ С. Яковлевпа аслă конюх П. Димитриев çакăн пирки шухăшламаççĕ-ха. Вĕсем çав-çавах çак йĕркесĕрлĕхсемпе лăпланса пурăнаççĕ.

Я. СИГАЙ.

Çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтермелле

КУКЕÇ. Районри чылай колхозсем çамрăк выльăхсемшĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çавна пула вĕсем уйрăм колхозсенче чылаях вилеççĕ. «Красная Звезда» колхозра 20 сăвăртан 19 сăвăр, Жданов ячĕпе тăракан колхозра 21 сăвăртан 11 сăвăр вилнĕ. Пăрусемпе путексем вилнĕ тĕслĕхсем те пур.

Çамрăк выльăхсене ун пек япăх пăхма юрамасть.

Г. ПЕТРОВ.

Депутатсем çуракине хатĕрленес ĕçре

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план çинчен» йышăннă постановленипе колхозсен, МТС-сен, совхозсен, çĕрĕç органĕсен, партипе совет организацийĕсен тĕп задачи—тырпулсен тухăçлăхне тата пухса илекен тĕштырăсемпе ытти ялхуçалăх продукчĕсен пĕтĕм хисепне пур майсемпе те ўстерессе пулса тăрать тесе кăтартса пачĕç. Вырăнти Советсемпе вĕсен депутачĕсем партипе правительствăн çакă питĕ пахa кăтартăвне пурнăçлас ĕçре колхозсене пур майсемпе те кулленех пулăшса пыма тивĕçлĕ.

Калинино районĕнчи чылай ял Совечĕсен исполкомĕсем, çавăн пекех вĕсен депутачĕсем те çуракине хатĕрленес ĕçре аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Уйрăмăнах кунта Чăваш АССР Верховный Совет депутачĕн Е. Б. Виноградова юлташăн ĕçне палăртмалла. Вăрçă пуçланнăранпах вăл Пушкин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçлет. Вăл Калинино райсовет исполкомĕн ларăвĕсенче час-часах пулать. Райсовет исполкомĕн постановленийĕсене хăй кăна мар пурнăçлать, çав решенисене ял Советĕнче ăнлантарса парать, вĕсене пурнăçлама ĕç-çыннисене мобилизацилет, çапла вара колхозсене кулленхи ĕçре пулăшса пырать. Ермошкино ял Советне кĕрекен колхозсенче хуть те мĕнле мероприяти пурнăçланă чухне те Виноградова юлташăн пархатарлă ĕçне туйса илме пулать. Вăл ертсе пыракан колхоз районра малта пырать.

Иртнĕ çулхи ялхуçалăх ĕçĕсене вăл октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлнех ăнăçлăн вĕçленĕ. Государство умĕнчи обязательствăсене октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне пурнăçласа, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 118 центнер тĕштырă, 168 центнер çĕрулми панă. 1945 çулхи пĕрремĕш кварталшăн аш-какай парса татнă.

Пушкин ячĕпе тăракан колхоз çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ. Пур тĕрлĕ культурăсен вăрлăхĕсене те кĕркуннех çителĕклĕ таран уйăрнă, вĕсене сортласа тасатса акмалли кондицие лартнă. Халь вĕсене лайăх амбарсенче упраççĕ, çирĕп хуралласçĕ. Лашасем тата кўлме вĕрентнĕ вăкăрсем лайăх та самăр ўт-пўллĕ. Плугсемпе ытти ялхуçалăх инвентарĕсене, ут таврашĕсене юсаса хунă, вĕсем çителĕклĕ. Вырăнти удобренисене планпа пăхнинчен ирттерсе хатĕрленĕ. Хире 210 лав торф кăларнă. 150 гектар çинче юр тытса хăварнă. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана тултарнă.

Колхозра агрокружок организациленĕ. Вăл лайăх ĕçлет. Унта 70—80 çын вĕренме çўрет. Плугарьсене плугпа мĕнле ĕçлемеллине, çураки вăхăтĕнче мĕн тарăнăш сухаламаллине, акакансене сеялкăпа мĕнле ĕçлемеллине вĕрентеççĕ. Кружокра уйхир бригадирĕ Г. Васильев, правлени членĕ Т. Малов, учительница Урванцева юлташсем вĕрентеççĕ.

3-мĕш бригадăн бригадирĕ—Ермошкино ял Совечĕн депутачĕ С. Кириллова юлташ та аван ĕçлет. Вăл ялхуçалăх машинисемпе кўлмелли хатĕрсене ытти бригадăсенчен маларах та лайăхрах юсаса хунă, вăрлăхсене тĕплĕн сортласа тасатнă. Çак бригада вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе 1-мĕш бригадăпа ăмăртса ĕçлет.

Колхоз, кашни çулах пахча-çимĕç вăрлăхĕсене чылай хатĕрлесе, ытти колхозсене сутма «Сортсемовощь» конторине парать.

Ял Совечĕн депутачĕсем пуçарнипе икĕ чуллă шыв арманĕнче шывпа ĕçлекен электростанци тăваççĕ. Халĕ 15 лаша вăйлĕ турбина илнĕ, электростанци валли çурт хатĕрленĕ. Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле колхозниксен килĕсене электричество çутти пама шутлаççĕ.

Çуракине ирттермелли ĕç планне туса бригадирсемпе колхоз активĕн канашлăвĕнче сўтсе-явнă. Канашлăва пысăк опытлă ватă колхозниксене те чĕннĕ, вĕсемпе ăçта тата хăçан мĕнле тырă аксан пысăк тухăçлă тырпул пулма пултарасси пирки канашланă.

Виноградовăпа Кириллова депутатсем хăйсен суйлавçисемпе çирĕппĕн çыхăнса ĕçлеççĕ, вĕсемпе канашлаççĕ, вĕсен канашĕсемпе пуçарăвĕсене йышăнса, яланах пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Çавăнпа та вĕсене хăйсен суйлавçисем юратаççĕ, хисеплеççĕ, итлеççĕ.

Çапла Пушкин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çуракине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илеççĕ.

М. ПРОХОРОВ.

Кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекенсен республикăри канашлăвĕ

Çак кунсенче Шупашкарта кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен агрономсен тата кок-сагыз хатĕрлекен конторăсен заведующийĕсемпе вĕсен агрономĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ.

Канашлу кок-сагыз акма хатĕрленесси çинчен тата акас ĕçе мĕнле туса ирттермелли çинчен, кок-сагыз вăрлăхне стратификацилесси çинчен тата пĕр çултах кок-сагыз тымарне туса илмелли майсем çинчен докладсем итлерĕ.

Канашлу участникĕсем Чăваш республикинчи ялхуçалăх работникĕсен канашлăвĕ чĕнсе каланине сўтсе-яврĕç, ăна ырласа, конкретлă обязательствăсем йышăнчĕç. Канашлура пулнисем çав чĕнсе калание колхозниксемпе колхозницăсене тĕплĕн ăнлантарса пама тата кок-сагыз акнă икĕ çулхи плантацирен кашни гектартан 10 центнертан кая мар кок-сагыз тымарĕ тата 15 килограмм кок-сагыз вăрлăхĕ, пĕр çул ўсекен плантацирен кашни гектартан 5 центнертан кая мар кок-сагыз тымарĕ пухса илессишĕн кĕрешме пулчĕç. Канашлура пулнисем пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илессишĕн Горький облаçне социализмлă ăмăртăва чĕнме йышăнчĕç.

Докладсем хыççăн районсенчен килнĕ агрономсем хăйсен ĕçри опычĕсем çинчен туха-туха каларĕç. Елчĕк районĕнчи çĕрĕç пайĕн кок-сагыз туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен агрономĕ Никитин юлташ çак районри «Автогигант» колхоз мĕнле майпа кашни гектартан 20,3 центнер кок-сагыз тымарĕ туса илни çинчен каларĕ. Красноармейски районри çĕрĕç пайĕн агрономĕ Николаев юлташ кок-сагыз калчине куçарса лартмалли майсем çинчен тата çак районри «Красный Борденер» колхозри Р. Петрова юлташ бригади мĕнле майпа ĕçлесе кашни гектартан 22 центнер ытла кок-сагыз тымарĕ пухса илни çинчен чарăнса тăчĕ.

Атă хăпăнчĕ, ăçта юсаттарас-ши?

Çурхи кунсем çывхарса килеççĕ. Çăматăсем хăйсен вăхăтне пурăнса ирттереççĕ. Вĕсен вырăнне атă-пушмаксем йăлана кĕреççĕ. Шыв-шырлă кунсенче никамăн та урисене йĕпетес килмест. Кашни çын хăйĕн сывлăхне упрама тăрăшать.

Чăнах та, хуть те мĕнле тумтир те хăйĕн ĕмĕрĕ çитиччен чăтать, ĕмĕрĕ иртнĕçемĕн çĕтĕлет, юрăхсăра тухать. Хăшĕсем вара çав тумтирех юсаса е юсаттарса тăхăнаççĕ. Атăсемпе пушмаксене вырăнти артельсен мастерскойĕсене юсаттарма илсе каяççĕ. Анчах та Красноармейски районри мастерскойсенче вĕсене мĕнле кĕтсе илеççĕ-ха?

Районра ĕçлекенсем, колхозниксемпе колхозницăсем артельсене атăсем юсама илсе пыраççĕ.

— Çак аттăн путушне пăтапа çапса парăр-ха? — ыйтаççĕ хăшĕсем. Теприсем тата атă пуçне сыптарасшăн. Анчах артель руководителĕсем вара йышăнмасăр «тăхăмласа» тăраççĕ.

Районра ĕçлекен манăн пĕр юлташ иртнĕ çулхи октябрь уйăхĕнчех Çĕнĕ Йĕкĕтри «Трудовик» артелĕн атă-пушмак тăвакан мастерскойне атă юсама кайса панăччĕ. Паллах, ăна атă кĕркунне кирлĕ пулнă, халĕ ак çуркунне те çитсе кĕрет, атта çаплах юсаса памаççĕ. Çĕнĕ Йĕкĕт ялне вăл сахалтан та вунпĕр хут çитнĕ ĕнтĕ. Артель председателĕ Петров ĕçленĕ чухне ăна яланах: «Çак кунсенчех тытатпăр, туса паратпăр», тенĕ. Халĕ ĕнтĕ артель председателĕ пулса урăх çын—Илья Кошкин юлташ ĕçлет. Вăл халĕ заказчика çапла ответлет:

— Пăта çук-ха. Йывăç пăта çапас — вăл чăтмасть, тимĕр пăта çапас—вăл пирĕн çук,—тет.

— Апла пулсан, çиппе çĕлесе парăр хăть,—тет заказчик.

— Çип çук, кĕнчеле арламаççĕ пирĕн кунта,—илтĕнет ответ.

Çакăн хыççăн заказчик: «Красноармейскинчи «Маяк» артеле çитсе пăхам-ха», тесе шутлать, унти мастерсем патне кĕрет.

— Килех,—тесе кĕтсе илеççĕ кунти мастерсем.

— Манăн атă шăтăк, сапласа пама пултаратăр-и?—тесе ыйтать хайхи çын.

— Пултараймастпăр, сăран татăкĕсем тата çип çук.—ответлеççĕ артельре.

— Апла пулсан, çипне хам тупатăп, сăран таткине хăвăр тупаймăр-ши?—тет каллех заказчик.

— Тупаймастпăр, анчах... çур литр ĕçтерсен, юсаса пама пулать-и тен,—теççĕ мастерсем шăппăнтарах.

Йĕкĕтри «Трудовик» артель рабочисене ĕçукçи вăхăтра параймасть, хăйĕн планне тултараймасть. Вĕсен ĕç пахалăхĕ çав тери начар. Районри пур артельсенче те тенĕ пекех атă-пушмаксене е тумтире, кĕпейĕмсене начар çĕлеççĕ. Атăсен е пушмаксен кĕлисем часах чалăшса каяççĕ, арканса тухаççĕ. Тумтирсене пĕр хулпуççине аялларах, теприне çўлерех çĕлесе параççĕ. Артельсенче рабочисен квалификацине ўстерессишĕн никам та тăрăшмасть.

Çакăн пек ыйту парас килет: Красноармейски районри юлташсем атă юсама пăтасем кам туса парасса кĕтеççĕ-ши. оборона завочĕсен тумалла-ши ăна е районри промкомбинатпа тимĕрç лаççисенчех тума пулать-ши? Атă çĕлеме çип хатĕрлесси те «ытла та йывăр ĕç» çав ĕнтĕ. Ăна тума та пĕр-пĕр тупă заводне заказ парас пулать пуль.

Çамрăк рабочисене камăн вĕрентмелле-ши тата?

С. ШАДИН.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

Сан-Франциско хулинче пухăнмалли конференцие Польша хутшăнасси çинчен

Мирпе хăрушсăрлăха сыхламалли пĕтĕм тĕнчери организацие туса хумашкăн апрелĕн 25-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинче (Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсенче) конференци пухăнмаллине пула, Польшăн Вăхăтлăх Правительстви (çакăн çинчен хаçатсенче пĕлтернĕччĕ) мартăн 22-мĕшĕнче Совет Союзĕн, Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен, Великобританин тата Китайăн Правительствисем патне çыру янă. Çав çырура вăл çапла каланă: Сан-Францискăри конференцие Польшăна хутшăнтармасăр ирттерни Польша халăхне кимĕнсĕрех кўрентерни пулнă пулĕччĕ, тенĕ. Çав çырура вăл Польша халăхĕн представителĕсем—Польшăн Вăхăтлăх Правительстви — конференцие хутшăнĕç, демократиллĕ Польша Пĕрлешўллĕ нацисен çемьинче тивĕçлĕ вырăн йышăнĕ, тесе шанса каланăччĕ.

Авторитетлă çынсем каланă тăрăх, Совет Правительстви Польшăн Вăхăтлăх Правительстви хăйĕн çав çырăвне яриччен Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсемпе Великобритани Правительствисене çапла каласа пĕлтернĕ: Польшăн Вăхăтлăх Правительствине çывăх вăхăтрах урăхлатса çитерейĕмесен, Сан-Францискăри конференцие Польшăн Варшавăри Вăхăтлăх Правительствин представителĕсене чĕнес пулать, мĕншĕн тесен пĕтĕм Польша территорийĕнчи власть унăн аллинче тăрать тата Польша халăхĕ ăна шанса пулăшса тăрать, тенĕ. Совет Правительстви çав çырура çакна та кăтартса панă: Сан-Францискăра пухăнмалли пĕтĕм тĕнчери анлă конференцире Польша представителĕсем пулманнине Великобритани Правительствипе Польшăн Вăхăтлăх Правительстви хушшинче тата Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен Правительствипе Польшăн Вăхăтлăх Правительстви хушшинче дипломатиллĕ çыхăнусем çуккипе ăнлантарса пама май пулмасть, мĕншĕн тесен Совет Правительстви те Индипе, Гаитипе, Либерипе, Парагвайпа дипломатиллĕ çыхăнса тăмасть, анчах вăл çапах та, Великобританипе Пĕрлешўллĕ Штатсен кăмăлне курса, çав çĕршывсене Сан-Францискăри конференцие хутшăнтарма килĕшрĕ, тенĕ.

Совет Правительстви çак ыйтăва союзлă правительствăсем хушшинче сўтсе-явса тивĕçлĕ решени йышăнма сĕннĕ.

Хальхи вăхăтра Совет Правительстви Америкăри Пĕрлешўллĕ Штатсен Правительствине çакăн çинчен пĕлтернĕ: Совет Правительстви, Польшăна Сан-Францискăри конференцие чĕнме сĕнни çине США Правительстви часах ответ парĕ тесе кĕтсе тăрать, тенĕ. Совет Правительстви çавăн пекех тата Великобританипе Китай Правительствисене çапла пĕлтернĕ: Польшăн Вăхăтлăх Правительстви çырăвне эпĕ пĕтĕмпех йышăнатăп, Польшăна Сан-Францискăри конференцие хутшăнса ĕçлеме май парĕç тесе шутлатăп, тенĕ. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Монтгомери фельдмаршалăн çарĕсен фронтĕнче пулса пыракан ĕçсем çинчен, тăшман ан пĕлтĕр тесе, халь те пичетлемеççĕ. Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерўре çакна çеç каланă: Руртан çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем, тĕттĕмпе усă курса, Рейн çумĕнчи укреплени патĕнчен ăнăçлăн наступлени туса пынă. Хăшпĕр бронетанковăй чаçсем 16 километр ытла малалла кайнă.

Эммерихра хаяр çапăçусем пыраççĕ. Руртан хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăрхĕвелтухăçнерехре наступлени туса пыракан бронетанковăй чаçсем Падерборнпа Ашаффенбург хушшинчи лини çинчи пунктсем патне çитнĕ. Падерборнран кăнтăрарахра халăх пурăнакан темиçе пункта тăшмантан тасатнă. Штаб пĕлтерĕвĕнче Марбург хулине йышăннине тата темиçе пункта, вăл шутра Бад-Наугейм тата Майн çинчи Франфурт хулисене тăшмантан тасатнине çирĕплетсе панă.

Дармштадт хулинчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем 19 километр тăршшĕ участокра Майн шывĕ çине тухнă та Ашаффенбург хулинчен хĕвелтухăçнерехре çав шывăн хĕвелтухăç енчи 13 километр тăршшĕ çыранне хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Ку районта тăшман хирĕç тăрса çапăçасси вăйланнă. Тăшман кунта малтанах хатĕрленсе хунă позицисемпе усă курать.

Мартăн 28-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 18.719 çынна тыткăна илнĕ.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 1.400 йывăр бомбардировщикĕ яхăн, 900 истребитель хўтĕлесе пынипе, паян Бременри, Гамбургри тата Вильгельмсхафенри çар объекчĕсене тапăннă.

Мартăн 30-мĕш ыран тепĕ чух çĕрле союзниксен авиацийĕ Берлин хулине тата çурçĕр-хĕвеланăç Германири объектсене тапăннă.

МАННГЕЙМ ХУЛИ ПАРАННИ ÇИНЧЕН ТЕПЛЕНРЕХХЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви американецсен Маннгеймри 7-мĕш армийĕн çарĕсемпе пĕрле тăракан хăйĕн специальнăй корреспонденчĕн вăхăтра çитереймен пĕлтерĕвне парать. Корреспондент Рейн çинчи Людвигсхафен хулине хирĕç ларакан промышленноçлă пысăк Маннгейм хулине мĕнле йышăнни çинчен пĕлтерет.

Маннгейм, çырать корреспондент, американецсен 44-мĕш пехотнăй дивизине телефонпа калаçса парăннă. Çурçĕрелле куçса пыракан Америка чаçĕсем хулана урам хыççăн урам тасатса пынă. Çав вăхăтра американецсен пĕр салтакĕ пĕр учрежденире телефон шăнкăртаттарнине илтнĕ. Вăл телефон трубкине илнĕ те хумханă сасăпа çапла каланине илтнĕ: «Эпĕ хулари чиновниксенчен пĕри пулатăп. Тархасшăн пеме пăрахăр, мĕншĕн тесен Маннгеймра пĕр нимĕç салтакĕ те çук».

Темиçе минут иртсен, хула бургомистрĕ телефонпа чиновник калани пекех каланă та хулана американецсен аллине панă. Америка офицерĕ ăна пур çĕрте те шурă ялавсем çакма приказ пама хушнă. Темиçе минутран Маннгейм хулинче пур çĕрте те шурă ялавсем вĕлкĕшме пуçланă. Çапла ĕнтĕ, Маннгейм телефонпа калаçса парăннă тĕнчери пĕрремĕш хула пулнă.

Ют çĕршыв хроники

▲ США сенатĕн çарĕç комиссийĕ çар повинноçне тепĕр пĕр çула тăсасси çинчен калакан законопроекта пĕрсаслăн ырланă.

▲ Дани патриочĕсем Копенгаген хулинчи чи пысăк çар предприятийĕсенчен пĕрине—радиозавода аркатса тăкнă. Çав завод Германи çарĕ валли радиоаппаратура тата подводнăй лодкăсемпе самолет-снарядсем валли оборудовани кăларса тăнă.

▲ Акгли авиаци министрĕн заместителĕ Брэбнер тата авиаци маршалĕ Петер Друммон, Канадăна кайма тухнăскерсем, авиаци катастрофипе пула пĕр хыпарсăр çухалнă.

▲ Акгли парламенчĕн икĕ палатине те апрелĕн 10-мĕшĕччен мункун каникулне янă. (ТАСС).

Çĕр тата тĕнче

Çĕр çийĕ пире тўремçи пек курăнать, çавăнпа та нумайĕшĕ Çĕр чăнах та тўремçи пуль, тесе шутлаççĕ. Анчах куçсем пире улталаççĕ. Вăл ак мĕн пирки çапла пулать: Çĕрпе танлаштарсан, этем çав тери пĕчĕккĕ, çавăнпа вăл Çĕрĕн пит сахал пайне çеç курма пултарать.

Усă тинĕсре е тўрем выртнă Çĕр пире тавракурăма (горизонта) пырса тĕкĕнекен тўремçи пек курăнать. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир темĕн чухлĕ малалла куçса пырсан та, пирĕн умра тавракурăмăн çав линиех пулать. Тинĕсре ишсе каякан кимĕ тавракурăмăн инçери линине çитнĕ пек туйăнать. Çавăнпа вара тĕлĕнмелле япала курма пулать: кимĕ куç умĕнчех таçта аялалла анса çухалать; лайăх бинокльпе пăхсан, çакна уççăнах асăрхама пулать. Малтан кимĕн кĕлетки курăнми пулать, унтан парусĕ путнă пек курăнать, юлашкинчен—мачта тăрри куçран çухалать. Çав вăхăтрах эпир, калăпăр, сывлăшри шарпа çўле хăпарас пулсан, çав кимме çĕнĕрен курнă пулăттăмăр, тавракурăм линийĕ вара инçерех курăннă пулĕччĕ.

Çĕр çинче пур çĕрте те курăнакан çак япала вăл Çĕр шар пек çаврака пулнине пĕлтерет. Чăнах та, 425 çул авал Магеллан ятлă тинĕс çынни, пĕрмаях хĕвеланăçнелле кайса, çĕр тавра çаврăнса тухнă. Пирĕн Çĕр шар пеккине пĕлсен, çынсем тепĕр пысăк йăнăш тунă. Вĕсем—Çĕр пĕтĕм тĕнче варринче тăрать, Хĕвел, Уйăх, çăлтăрсем—пысăк мар «светилăсем» (çутă япаласем) кăна, тесе шухăшланă. Анчах светилăсем епле куçса çўрени çинчен лайăхрах пĕлсе çитсен, этемĕн çав шухăша та пăрахмалла пулнă.

Хĕвел хĕвелтухăç енче тухать те хĕвеланăç енче анса ларать. Кашни çăлтăр та çавăн пекех. Анчах пĕлĕтĕн çурçĕр пайĕнче. Поляр çăлтăрне çывăх тăракан çăлтăрсем тухмаççĕ те, анмаççĕ те. Вĕсем пĕр точка тавра—тĕнче полюсĕ текен точка тавра—çаврăнаççĕ. Çав вăхăтрах вĕсем пĕр-пĕринчен аякках та каймаççĕ, пĕр-пĕрин патне те çывăхармаççĕ. Çăлтăр ушкăнĕсем пĕр пекех юлаççĕ. Çапла ĕнтĕ, пĕлĕт темле тĕнĕл тавра çаврăннă пек туйăнать.

Авалхи çынсем çавăн пирки те—пĕлĕт хытă япала пуль, ун çумне çыпăçтарса лартнă светилăсемпе пĕрле вăл çĕр тавра çаврăнать пуль, тесе шутланă. Пирĕн Çĕр вĕсене çав тери пысăк курăннă, çавăнпа та вĕсем—Çĕр чăнахах та пĕр вырăнтах тăрать пуль, тесе шутланă. XVI-мĕш ĕмĕрте пурăннă Коперник ученăй çакна ĕненмен. Карусель çинче çаврăнакан çынна та площадьри çуртсем çаврăннă пек курăнаççĕ вĕт. Тен, светилăсем те çаврăннă пек çеç курăнаççĕ, тĕрессипе Çĕр хăй çаврăнмасть-ши?

Коперник çак ыйту пирки шухăшлама пуçланă: Хĕвеллĕ, çăлтăрсемлĕ çав тери пысăк тĕнче çĕр тавра çаврăнать, тесе шутлас вырăнне, Çĕр хăйĕн тĕнĕлĕ тавра çаврăнать, тесе шутлама çăмăлтарах-çке. Шар евĕрлĕ Çĕр çаврăнать пулсан, вара пĕтĕм пĕлĕт çинчи светилăсем пирĕн Çĕр тавра çаврăннă пек туйăннине те, Хĕвел тухса аннине те ăнланса илме пулать. Çаврăнакан Çĕр çийĕнчи сывлăш мĕншĕн сирĕлсе кайманнине Коперник ун чухне пĕлме пултарайман. Каярахпа тин ученăйсем Çĕр таврари сывлăш та, ытти япаласем те Çĕрпе пĕрле çаврăннине тавçăрса илнĕ. Çĕр чăмăрĕ сасартăк çаврăнма чарăнас пулсан, эпир, сасартăк чарăннă вагон çинче малалла ыткăнса кайнă пек, питĕ вăйлăн хĕвелтухăçнелле ыткăнса кайнă пулăттăмăр.

Галилей пĕлĕт çине хăй шухăшласа кăларнă труба витĕр пăхма пуçласан тин çынсем Коперник шухăшĕ тĕрĕс пулнине ĕненме пуçланă. Пĕлĕт çинчи «светилăсем» (çутă япаласем) тĕнчери çав тери пысăк япаласем пулни, вĕсем пирĕнтен çав тери инçере тăни вара паллă пулнă. Тĕнчери пространствăра ученăйсем çĕнĕ планетăсем тупма пуçланă. Кăйăкхур çулĕ текенскер çинчи пĕчĕк çутă пăнчăсем çав тери йышлă çăлтăрсем пулни палăрнă. Вăл çăлтăрсене ахаль куçпа курма çук. Уйăх çинче мĕлке ўкерекен пысăк тусем пуррине пĕлнĕ. Марс çинче шурă çĕлĕк пек курăнса выртакан поляр юрне тата тинĕс пек пысăк путăксене курнă. Юпитерпа Венера тавра тачка пĕлĕтсем купаланса тăнине асăрхнă. Сатурн планетăна тĕпчесе пĕлнĕ чухне тĕлĕнмелле япала курнă: ун тавра çутă ункă пуррине сăнанă. Вăл ункă планета çумне сĕртĕнмесĕр тăнă. Вăл ункă пысăк мар пит нумай метеоритсенчен тăни паллă пулнă. Çав метеоритсем Сатурн тавра çаврăнса çўреççĕ. Çав тери пысăк тĕнче Çĕр тавра çаврăнма пултарайманни вара паллă пулнă. Çĕр хăй çаврăнать тесе шухăшласан, çак япаласем пурте ăнланмалла пулса тăраççĕ.

Коперник светилăсем талăк хушшинче мĕнле çаврăннине çавăн пек ăнлантарса панă та вара.

Çăлтăрсем хушшинчи Хĕвел çулталăк хушшинче мĕнле куçса çўренине тата планетăсем темле-темле çўренине тавçăрса илме йывăртарах пулнă. Авалхи грексемех ĕнтĕ Хĕвел çулталăк хушшинче хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнелле, çăлтăрсен пĕр ушкăнĕнчен тепĕр ушкăнне куçнине пĕлнĕ. Çапла майпа куçса пырса, вăл хăйĕн çулĕ çинчи çăлтăрсене, вăйлă çутатса, курăнмалла мар туса хурать. Планетăсем те çăлтăрсен пĕр ушкăнĕнчех тăмаççĕ. пĕлĕт çинче ункă пек çаврăнса илсе, вĕсем çăлтăрсен пĕр ушкăнĕнчен теприне куçаççĕ. Анчах хĕвеланăçĕнчен хĕвелтухăçнелле вĕсем пĕр чарăнмасăр куçмаççĕ: вăхăчĕ-вăхăчĕпе планета чарăнать те каялла куçма пуçлать. Унтан, йăлă пек çаврăнса илсе, каллех хĕвелтухăçнелле ĕлĕкхинчен те хăвăртрах куçма пуçлать.

Планетăсем йăлăсем пек çаврăна-çаврăна пырса малалла куçни Çĕрпе планетăсем Хĕвел тавра çаврăннинчен килет, тенĕ Коперник. Планетăсем вĕсем куçа çеç çавăн пек куçнă пек курăнаççĕ. Малалла каякан вагон чўречинчен пăхсан, телеграф юписемпе йывăçсем те куçнă пек курăнаççĕ. Планетăсем те ĕнтĕ çавăн пирких куçнă пек курăнаççĕ. Анчах хамăр вагонра ларса пынине пĕлсе, эпир йывăçсем куçманнине тавçăрса илетпĕр. Çĕр хăйĕн çулĕпе Хĕвел тавра çаврăннă чухне эпир Çĕр çаврăннине туймастпăр. Çĕр пире пĕр вырăнтах тăнă пек туйăнать. Ун таврари светилăсем вырăнтан-вырăна куçнă пек туйăнаççĕ.

Çĕр пространствăра ирĕклĕн куçса çўрет текен шухăшпа килĕшме Коперник вăхăтĕнчи çынсене йывăр пулнă. Уйăх мĕн пирки пирĕн çĕрпе пĕрле çўрени те вĕсемшĕн паллă пулман. Çĕр пространствăра ункă пек çулпа куçса пырать пулсан, çывăхри çăлтăрсем çур çул хушшинче пĕр еннелле, тепĕр çур çул хушшинче тепĕр еннелле куçмалла, тесе кăтартса панă ун чухне. Анчах апла куçнине никам та асăрхаман.

Галилей Юпитерăн тăватă спутник пуррине тупсан, вĕсем унпала пĕрле Хĕвел тавра çаврăнни çинчен пĕлсен, Уйăх та çавăн пекех Çĕрпе пĕрле çаврăнса пыни паллă пулнă вара. Каярахпа, кĕтес виçекен питĕ тĕрĕс приборсем шухăшласа кăларсан, чи çывăхри çăлтăрсем çулталăк хушшинче аякрисен шайĕнчен мĕн чухлĕ куçнине хисепе илме май пулнă. Вĕсем питĕ сахал куçаççĕ иккен. Çакă вăл Хĕвел системи чи çывăхри çăлтăрсенчен те çав тери инçере тăнине кăтартать.

Авалтанпах çынсем 5 планета пĕлнĕ: Меркурие, Венерăна, Марса, Юпитера, Сатурна. Меркурипе Венера Хĕвел çывăхнерех тăраççĕ. Çавăнпа Çĕр вĕсемпе Хĕвел хушшине пулмасть. Марс, Юпитер тата Сатурн Хĕвел тавра Çĕр çаврăннă çултан инçерех çулсемпе çаврăнаççĕ. Çывхартса кăтартакан трубасем витĕр пăхма вĕренсен, çакă паллă пулнă: пирĕн Çĕр ытти йышлă планетăсемпе пĕр тăванах иккен. Сатурн хыççăн Уран ятлă пысăк планетăна тупнă. Каярахпа Нептунпа Плутон планетăсене те тупнă. Юпитер, Сатурн тата Уран ятлă планетăсем тавра урăх пысăк планетăсем çаврăннине тата Марспа Юпитер хушшинче питĕ нумай пĕчĕк планетăсем пуррине пĕлнĕ. Вĕсенчен тăватташĕн çеç урлăшĕ 150 километр ытларах, ыттисем унтан та пĕчĕкрех.

Планетăсем Хĕвелтен мĕн тери инçерине пĕлес тесен, Хĕвеле пысăк панулми пысăкĕш тесе шутлăр. Вара çав улмаран 10 метрта булавка вĕçĕ пек пĕчĕк япала—Çĕр пулать. Хĕвелпе Çĕр хушшинче икĕ пĕрчĕ пек Венерăпа Меркурий планетăсем пулаççĕ, Хĕвелтен 16 метрта—Марса пĕлтерекен тепĕр пĕрчĕ пулать. Пирĕн Çĕртен 1300 хут пысăкрах Юпитер, чей çырли пысăкĕш пулса, Хĕвелтен 52 метрта вырнаçать. Хĕвелтен 100 метрта, чей çырли пысăкĕш пулса, Сатурн вырнаçать, ун тавра 4 миллиметр хулăмĕш ункă пулать. Пăрçа пысăкĕш Уран Хĕвелтен 196 метрта, Нептун—300 метрта, Плутон—400 метрта пулаççĕ, Плутон булавка вĕçĕнчен те пĕчĕкрех пулать.

Анчах çăлтăрсем пирĕнтен тата нумай инçере пулаççĕ. Пирĕн панулми пысăкĕш Хĕвеле чи çывăх çăлтăр унтан 2.600 километрта вырнаçать. Хĕвеле пĕлтерекен панулми Мускавра пулсан, Сириус ятлă çутă çăлтăр Красноярск патĕнче пулать, çывăхри тепĕр çăлтăр—Владивосток çывăхĕнче пулать. Этем хăçан та пулсан Уйăх çине е Марспа Венера çине çитсе курĕ тесе ĕмĕтленме пулать пулсан, çăлтăрсем çине çитсе курасси çинчен ĕмĕтленмелли те çук. Секунда хушшинче 300.000 километр каякан çутă пайăркки те çывăхри çăлтăр патĕнчен пирĕн пата тăватă çул ытларах вăхăтра çеç çитет. Инçетри çăлтăрсенчен вăл çутă темиçе пин çултан тин çитет.

Тĕнчери вĕçĕ-хĕррисĕр пространствăри вăтам çăлтăр—пирĕн Хĕвел. Ун тавра планетăсем çаврăнаççĕ. Хĕвел пĕр вырăнтах тăрать-ши е куçса çўрет-ши? Тен, Хĕвел те пространствăра хăвăрт куçса çўрет. Çакна çăлтăрсем куçнине сăнанипе çеç пĕлме пулать. Хĕвел пространствăра планетăсемпе пĕрле куçать пулсан, умри çăлтăрсем ăна çул памалла пулать. Çăлтăрсем вăрахăн куçнине сăнаса пынăçемĕн астрономсем çакна асăрханă: Геркулес созвездийĕнче (çăлтăрсен ушкăнĕнче) çăлтăрсем пĕр вырăнтан тĕрлĕ еннелле куçаççĕ. Пĕлĕтĕн тепĕр енче (Кăнтăрти çурчăмăрта) вĕсем пĕр çĕре пырса тухнă пек курăнаççĕ. Апла пулсан, Хĕвел чăнахах та Геркулес созвездийĕ патнелле хăвăрт вăркăнать, ун хыççăн Çĕрпе ытти планетăсем те пыраççĕ.

Пирĕн Çĕр тĕнче пространствинче каламалла çук хăвăрт куçса пырать. Пĕр талăк хушшинче вăл икĕ миллион километра яхăн каять.

Хĕвел—Кайăкхур çулĕ текен ушкăна кĕрекен нумай миллиард çăлтăртан пĕри çеç пулса тăрать. Хуркайăк çулĕ текен ушкăн хăй те çăлтăрсен пĕр пуххи кăна, ун пеккисем пространствăра питĕ нумай. Пирĕн Çĕр—тĕнчери çав тери пĕчĕк пĕрчĕ кăна.

Ф. БУБЛЕЙНИКОВ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00051 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000